**Хĕрарăмсемпе салтаксем**

Хĕрарăмсем
пире çуратнă самантра
мĕн-мĕн çинчен
шутлаççĕ-ши сисмен хутран?
Пĕр шухăшне
пĕлме пулать пĕр йăнăшми:
Ан пултăр, теççĕ, варçăра
çĕр йынăшни.

Хĕрарăмсем
пире ăсатнă кунсенче
мĕн-мĕн çинчен
шутлаççĕ-ши перрон çинче?
Пĕр шухăшне курма пулать
куçĕсенче:
лăпках пулинччĕ ĕмĕрех
ку çĕр çинче.

Эпир ӳсетпĕр те
каятпăр салтака.
Пĕр мăшăр атă.
Телее — мăшăр такан.
Чĕн пиçиххи — кĕлте çыххи —
шинельсене
шăп пилĕкрен туртса çыхать
пĕр кĕлтене.

Е çурăмпа,

е хырӑмпа,

е урапа...

Е улӑхпа,

е пуш хирпе,

е урампа...

Салтак шӑвать.

Салтак выртать.

Салтак утать...

Пит йывӑр чух

пӗрремӗш хут табак туртать.

Хӗрарӑмсем!

Эсир пилленӗ-ҫке пире

шинельсемпе

хӳтӗлеме Ӗҫе, Мире.

Хӗрарӑмсем салтаксемпе пӗрле

кашни:

— Ан пултӑр, — теҫҫӗ, —

вӑрҫӑра ҫын йынӑшни.

*Дмитриев, А. Хӗрарӑмсемпе салтаксем : [сӑвӑ] / А. Дмитриев // Тӑван Атӑл. – 2010. – № 3. – С. 88.*